# КĂВАК ХУППИ

Чăваш чĕлхи пĕтсе пырать-и халĕ? —
Тесе ыйтаççĕ айвансем манран.
Ара, пĕтмест тесе сире кам калĕ?
Вилсе выртать вăл хĕрлĕ юр çусан.

Мана чăваш анне савса çуратнă,
Сăпка юрри юрланă чăвашла,
Сĕтне ĕмтернĕ вăл, чĕлхе хăватлă
Пулма перо тыттарнă ман алла.

Анне сĕтне манса кайма пĕлеп-и,
Хам ĕçекен таса çăлкуçĕнчен
Чакми вăй илнĕ чух каласмăп эпĕ
Тăван чĕлхемĕр хăрасси çинчен.

Пите кĕççе çĕлемĕп, курмăп намăс:
Чĕлхе аран сывлать, пĕтет тесен
Чăлахсене хам халăхпа пĕр харăс
Ят парăп эпĕ: суккăр пăвансем.

Юман вăрманĕ пек тăван чĕлхемĕр
Парка икеллĕ юрă-кĕвĕре
Кашланă чух унта эсир кĕреймĕр,
Унта юрамĕ панлатма сире!

Сире чăваш поэчĕ — шăпчăк эпĕ —
Тапса ӳкерĕп хурçă чĕремпе.
Пĕччен-и эпĕ? Поэтсен хисепĕ
Ӳсет геометри прогрессипе.

Нихçан та тиркемен те, çук тиркессĕм
Пĕр чĕлхене те аслă çĕр çинче.
Пурин те пур хăйне тăван кĕтесĕ,
Пуриншĕн ирĕк, тăвăр мар тĕнче.

Хам эпĕ ĕмĕр вилĕмсĕр матери
Пулса çăва тĕпне выртиччен ех
Тăван çĕршывăм карапсем вĕçтерĕ
Марспа ытти планетăсем çине.

Чăваш ионосфера витĕр каçĕ.
Вăл вырăс та тутар юлташсемпе
Пĕр вĕççĕр-хĕрсĕр космосран калаçĕ
Нарспипелен Сетнерĕн чĕлхипе.

Куç чирĕпе чирленĕ халăх теççĕ.
Анчах унта-ши аслă чапĕ ун?
Архив тусанĕ витĕр сан, тĕпчевçĕ,
Курасчĕ чĕрĕ юн та паттăр чун!

Асаттесем чĕлхемĕре сыхланă
Кĕрешӳре юхтарнă юнĕпе,
Пире пилленĕ, упрама каланă
Пĕр пĕрчĕн-пĕрчĕн ылтăн-кĕмĕл пек.

Чун иллисем хĕстернĕ чух мăнтарăн
Пулман тăван чĕлхе, чăваш чĕлхи.
Сăмахĕсен арчи паян та тарăн,
Чакман та, тарăн юлнă ĕлĕкхи.

Хама çуратнă халăх ылтăн ячĕ
Историн сарлака кĕнекинче
Янранă чух тăмасть чăваш поэчĕ
Пĕр виçĕ пуслăх пăхăр хакĕнче.

Кăвак хуппи пĕрех самант çеç хăвăрт
Пĕр уçăлса пĕр хупăннă чухне
Мĕскер каланă, çавă пулĕ хăвăн,
Тупма çеç ĕлкĕр, теççĕ, ĕмĕтне.

Кăвак хуппи çынна телей сасартăк
Пани пулман чухне хитре юмах:
— Мана чăваш поэтĕнчех хăвар та
Пар çамрăк ĕмĕр, — тейĕттĕм анчах.

Чăваш чĕлхи вăл — манăн чун та ĕмĕт,
Хĕвел те уйăхăм — тăван чĕлхе,
Пуçна чĕлхе вилессипе ан çĕмĕр,
Вăл халĕ кирлĕ халăха!
Мĕнле чĕлхе килет малашлăха, —
Ăна кăтартĕ тепĕр çутă ĕмĕр.

*1959*